Çĕнĕ çăкăр тата пушар хуралĕ: асăрхаттарусем вырăнлă

Вырма ĕçĕсене вут-кăвар ура ан хутăр

Авăн уйăхне кĕтĕмĕр. Тавралăх çĕнĕ тыр-пул илемĕпе, унăн тутлă шăршипе тулчĕ. Куратпăр, вăхăт утти хăйĕннех тăвать: анчахрах-ха çур аки кĕрленĕ уйсенче паян сарă тумлă тыр-пул чŭхенсе ларать, тулли пучахсем хресчене вăхăтра ака ирттернĕшĕн тав тунăн пуç тайса халĕ вырмана йыхăраççĕ.

Хирти пŭлмери мар, тет халăхăмăр сăмахлăхĕ. Çакна çĕр ĕçĕнче ŭсекен тата ĕçлекен ачаран ăша хывать. Ураха пулаймасть те. Вырма çĕр ĕçченĕшĕн чи ответлă тапхăр. Куç шăрçине сыхланă пек пăхса ŭстернĕ тырă-пулăна çухатусемсĕр кĕске вăхăтра пуçтарса кĕртесси ку чухнехи кашнин тĕп тĕллевĕ. Халĕ калаканине никам та хирĕçлемĕ, анчах çак хĕрŭ тапхăрта пушарсем сехре хăпартни тата вĕсем çĕр ĕçченĕн тăрăшуллăхне самантрах пысăк сиен кŭме пултарни пирки те пытарса хăварма юрамасть.

Вырма пуçлансан республикăра çулленех хире тухнă техника, тырă типĕтмелли агрегатсем, типĕтсе янтăланă утăулăм, тырă склачĕсем çунса кĕлленнĕ тĕслĕхсем пулаççĕ. Çакă малашлăха пăхса ĕçлекен, "Агропромышленноçа аталантарасси" наци проектне пурнăçлассишĕн тăрăшакан çĕр ĕçченĕшĕн хăрушла ŭкерчĕк. Кунашкалли район территорийĕнче те çук мар. Хамăр енре пулнă пушарсене тишкерсен, "хĕрлĕ автан" тухнин сăлтавĕсем çултан-çул пĕрешкел майлах сыхланса юлни хытах шухăшлаттарать. Вĕсем: вырмара уçă çулăмпа усă курнă чух асăрханусăр пулни, ĕçе хутшăнакан техникăна пушар сŭнтермелли пирвайхи хатĕрсемпе çителĕклĕ комплектламанни, çиçĕм çапасран хŭтĕленменни, электрооборудование юсавлă тытманни, тырă типĕтмелли агрегатсене температура датчикĕсемпе тивĕçтерменни (çак сăлтавпа çулленех тырă типĕтнĕ вăхăтра вуншар тонна тырă çунса кĕлете кĕреймесĕрех юлать) тата ытти те. Çаксене курса-пĕлсе тăнă çинчех ху çалăх производство кооперативсенче тата продукци тирпейлекен предприятисенче çĕнĕ тырă пухса кĕртнĕ вăхăтра пушар хăрушсăрлăх правилисене сĕмсĕррĕн пăснине, патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕ каланине-асăрхаттарнине шута хуманнине кашни çулах куратпăр, анчах... Кайран вара чавса çывăх та çыртма çук.

Пĕрлешŭллĕ хуçалăхсем вырмана тухрĕç те ĕнтĕ. Анчах çакă мĕн туса çитерейменни çине алă сулмаллине пĕлтермест. Пушар хăрушлăхĕ хĕрŭ ĕç çирен катара тăтăр тесен çĕр ĕçченĕн ĕнер туса çитерейменнине паян пурнăçлассинчен те пăрăнмалла мар. Вырмана хутшăнакансене – хуçалăхсен ертŭçисемпе специалисчĕсене, механизаторĕсемпе рядовой ĕçченĕсене – паян çакăн пек сĕнŭçем парас килет:

1. Кая юлман-ха, вырмана хутшăнакан ял хуçалăх техникине тата тырă типĕтмелли комплекссене пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса ĕçе хатĕрленĕ хыççăн специалистсемпе ытти явапла çынсенчен йĕркеленĕ комисси ятарлă актпа йышăнсан çеç ĕçе кĕртме юрать.

2. Вырмана хутшăнакан техникăна пушара хирĕç кĕрешмелли пирвайхи хатĕрсемпеле нормăпа палăртнă чухлĕ комплектламалла. Çак тĕллевпе кашни комбайн, машина-трактор, хирти е йĕтем çинчи агрегат çинче иккĕрен кая мар огнетушитель, икĕ кĕреçе, шăпăр, ятарлă ещĕкпе хăйăр, ятарлă шăнăçпа шыв пулмалла. "Хир карапĕсене" пушар сŭнтермелли пирвайхи хатĕрсемпе çителĕклĕ чухлĕ комплектламанни хуçалăхсемшĕн уйрăмах хакла ларма пултарать.

3. Вырма тапхăрĕ тырăпа пĕрлех улăмпа та пуян. Çак тапхăрта ăна вăхăтра пуçтарса кĕртме те техника йышлă хутшăнать. Çавăнпа та ку ĕçе двигательсĕн глушителĕсем çине хĕм сŭнтерекен устройствăсем вырнаçтарман техникăна кăлармалла мар.

4. Хĕрŭ ĕç çине хутшăнакансемпе тăтăшах пушар хăрушсăрлăх правилисемпе инструктажсем ирттермелле, вĕсене пушарпа пуçламăш самантра тĕрĕс кĕрешме вĕрентмелле.

5. Хиртен, улăх-çарантан пуçтарăнса кĕлете, капан-урана кĕнĕ тырă-пулă, утă-улăм упранакан вырăнсенче, складсемпе ампарсенче хурал тăратассине йĕркелемелле.

6. Çĕнĕ тырă упранакан тата ăна тасатса-аласа типĕтекен вырăнсенче усă куракан электричествăпа ĕçлекен техника хатĕрĕсене вĕсемпе ĕçлеме çирĕплетнĕ явапла çынсен ĕçе тĕплĕ тĕрĕслесе йышăнмалла. Вĕсемпе ĕçленĕ чух хăрушсăрлăх йĕркисене, пушар хăрушсăрлăх правилисене, ĕç технологине çирĕп пăхăнса ĕçлемелле. Акă, юлашки çулсенче "Сундырский" (халĕ "Рассвет" агрофирма) хуçалăхра тырă типĕтмелли агрегатсем юсавлă марринчен икĕ хутчен тухнă вутçулăмра темиçе тонна тырă юрăхсăра тухнă пулсан, пĕлтĕрхи вырмара Е. Андреев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче тырă типĕтмелли напольнăй сушилка тырри-мĕнĕпех тĕпĕпех юрăхсăра тухрĕ. Самантлăх йĕрке пăсса тимлĕхе çухатнă тĕслĕхсем вырăнсенче çивĕч ыйтусем кăларса тăратни ытти хуçалăхсенче те тĕл пулать-ха.

7. Вырма вăхăтĕнче йĕтемсем çинче хуралçăсем тытасси пирки манмалла мар. Кунта ĕçлекенсем валли пирус турттмалли ятарлă вырăн, алă айĕнчех хăйăрпа шыв, огнетушитель пулмалла.

Напольнăй сушилкăсем пирки çулленех асăрхаттарса тăратпăр пулин те, чылай хуçалăхсенче вĕсене генераторсенчен кирпĕч стенапа уйăрма васкамаççĕ, ГСМ юхнине "асăрхамаççĕ". Пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманни мĕн патне илсе çитернине пĕлтĕрхи вырмара Е. Андреев яч. хис. хуçалăхăн напольнăй сушилкинче тухнă пушар та çирĕппĕнех хыпарлать.

Йĕтемсем çинчен калаçнă май, кунти тепĕр çивĕч ыйту вăл – çиçĕм çапасран сыхланмалли устройствăсем çине çителĕксĕр тимлĕх уйăрни. Йĕтем çине илсе пынă тырăна вăхăтра типĕтсе ĕлкĕрейменнипе вăл хĕрсе каять, çиçĕм çапас хăрушлăха нумай хут ŭстерет. Çавăнпа та çиçĕм çапасран сыхланмалли устройствăсене кая юлмасăр çук çĕрте лартмалла, юсавсăрриссене юсамалла.

8. Вырмари тепĕр ответлă ĕç вăл – улăм пуçтарса тирпейлесси. Темех мар темелле, анчах кунта та пушар хăрушсăрлăх правилисене тĕп вырăнта тытмасан инкек алăк умнех пырса тăрать. Çак çултан пăрăнас тесен типĕ улăм патĕнче пирус туртассинчен асăрханмалла, улăм урисене пурне те пĕр çĕре вырнаçтарассинчен хăтăлмалла, вĕсене электропередача линийĕсенчен 15 метртан, çулсем хĕрринчен 20 метртан, çурт-йĕр таврашĕнчен 50 метртан кая мар аяккарах вырнаçтармалла. Ута-улăм хранилищисен алăкĕсене тăтăшах хупса тăмалла.

Куратпăр ĕнтĕ, пĕлетпĕр, ăнланатпăр, вырмари пушарсем пĕри те ăнсăртран тухмасть. Апла пулсан, пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнса ĕçлени çеç çивĕ хут тар юхтарса ŭстернĕ тырă-пулăна тата утă-улăма çухатусемсĕр пухса кĕртме май парать.

Андрей ЕФИМОВ,
патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене вăхăтлăх туса пыракан.

Çавра сĕтел: эсир ыйтнипе, пĕлес тенипе

Çуллахи кунсем: инкексĕр пулччăр вĕсем

"Ŭкессе пĕлнĕ пулсан, тŭшек сарăттăмччĕ", – тет инкек ăнсăртран пырса çапнипе пăшăрханса инкек тŭсекен. Анчах та ăна тŭшек сарма кам чарнă-ха? Философилле çак шухăша страховани ыйтăвĕсем çине куçарсан, пĕтĕмĕшле ŭкерчĕке куç умне кăларсан лару-тăру конкертлă виçене ларать.

Шăрăх та ĕçпе тулнă çу кунĕсем час-часах тимлĕхе хыçала хăвараççĕ. Кайран вара... Кая юлсан, чавса çывăх та – çыртма çук. Çапла ан пултăр, мĕн пулни кашнийĕншĕнех урок пултăр тесе вулавçăсем ыйтнипе паянхи калаçăва "Росгосстрахăн" Чăваш филиалĕн Муркашри страхлакан пайĕн пуçлăхĕпе Валерий Иванович Вязовпа пĕрле район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру пайĕн ертŭçине Николай Панфилович Милютина тата районти патшалăх пушар надзор аслă инспекторне Андрей Васильевич Ефимова чĕнтĕм. Районти инкексемпе страховани ĕçне пĕр алла илсе пăхсан кунта çиччĕ виççе пĕрре касмалли чылай пулни курăнать. Апла пулсан пуçлар-ха хамăр çавра сĕтеле.

– Пирĕн паянхи калаçу шăнăрĕ – страховани. Пŭрт-çурта, пурлăха тата хамăра тĕрлĕ инкек-синкекрен страхласси паян пуçланнă ĕç мар. Ку ыйтусем çынсене ĕлĕкренпех хумхантарнă.

В. В.: Паян калаçăва хутшăнакансене кура Сирĕн ыйтăвăр çине çаплapах хуравлас килет. Этемлĕх ĕмĕрĕпе пăхсан страховани ĕçĕ çамрăк-ха. Акă, пирĕн компани иртнĕ кĕркунне 85 çул тултарчĕ. Пуян ĕç опычĕ пухма ĕлкĕрнĕ вăл çак вăхăтра, кашни çын патне чун уççи тупнă. Анчах çынсем тĕрлĕ инкек-синкекрен пĕрле хŭтĕленме тата алăкран шаккакан усалпа пĕрле кĕрешме çăмăллине ăнланса çĕршер-пиншер çул каяллах вăл е ку ушкăнсене пĕрлешсе вăл е ку инкеке пĕрле ура хурма тăрăшнă, çамрăксене ачаранах шыва кĕнĕ чух асăрхануллă пулма, ĕçре пуç çухатма кирлĕ маррине, вут-çулăмпа асăрхануллăх тытма вĕрентнĕ. Çакă мар-и-ха вăл паянхи страховани никĕсĕ? Хирĕçле хурав çук. "Росгосстрахăн" Чăваш филиалĕн Муркашри страхлакан пайĕ паянхи куна нумай тĕслĕ страховани ĕçĕсем пурнăçлать. Иртнĕ çул район çыннисем шаннипе тата хамăрăн вырăнсенчи агентсем тимленипе 17100 страховка килĕшĕвĕ турăмăр. Пĕтĕмпе 2 миллиард та 639 миллион та 200 пин тенкĕлĕх пурлăхпа сывлăха страхласа район çыннисем 16 миллион та 100 пин тенкĕ страховани укçи тŭлерĕç. Инкек пырса çапсан йывăр вăхăтра пирĕн пулăшупа 4 миллион ытла тенкĕлĕх усă курчĕç. Кунта мухтанса калас килмест, анчах шыва путакансемшĕн улăм пĕрчи те тĕкĕ тесе палăртсан, инкек тŭсекеншĕн пирĕн пулăшу самай курăмлă.

А.Е.: Валерий Иванович сăмахĕсене хамăр ĕçри лару-тăрупа çыхăнтарас килет. Пушар. Пур-и-ха пирĕн тăрăхри мирлĕ çынсемшĕн çак инкекрен хăрушăраххи. Вăрăран юлать те ирĕке кайнă вут-кăвар пĕтĕмпех илсе каять. Пушарсем хыççăн район çыннисем пирĕн пата инкек пулнине çирĕплетме справка илме пыраççĕ. Анчах нумайăн-и-ха вĕсем? Кашни пушар хыççăнах инкек тŭсекенсем çухатăва çирĕплетме хут ыйтаççĕ-и-ха? Практика кунта майлă хурав парайтăвăтăр. Акă, иртнĕ çул районăмăр территорийĕнче 49 пушар пулчĕ. Вĕсенче миллионшар тенкĕлĕх пурлăх кĕлленнипе пĕрлех 12 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Кăçал та районта вут-кăвар алхассипе лару-тăру лăпках мар. Паянхи куна ялсемпе район территорийĕнчи коллективлă садсенче пушар тухнă 27 тĕслĕх пулчĕ. Вĕсенче 6 çын пурнăçĕ татăлчĕ. Пирĕн патăмăра пушар пулнине çирĕплетекен справкăсем патне килекенсене пăхса инкек тŭсекенсенчен ытларахăшĕ пурлăха та, кил-çурта та, сывлăха та страхламанни курăнать. Çакă инкеке тŭсекенсен çухату йывăрăшне ŭстерни каламасăрах паллă. Акă, кăçалхи майăн 18-мĕшĕнче Чуманкассинче пилĕк хваттерлĕ çурт çунса кайрĕ, унта виçĕ çын пурнăçĕ (пĕри – ача) вăхăтсăр татăлчĕ. Хыççăнхи тĕпчев ĕçĕсем унта пурăннă çынсем пŭрт-çурта та, пурлăха та, хăйсене те тĕрлĕ инкек-синкекрен страхламаннине кăтартса пачĕ. Паллах, страхланас ĕç вăл – ирĕклĕ ĕç. Анчах хамăр пурнăçлакан ĕçпе инкек тŭсекенсем ăна епле чăтса ирттернине тата вĕсен часчасах ниçтан та пулăшу çуккине курсан, чун ыратса килет.

Пушарта кил-çуртпа пĕрле çынсем ушкăнпа вилни пĕлтĕрхи июнĕн 3-мĕшĕнче Катькас ял тăрăхĕнчи Шатракассинче те пулнăччĕ. Çуртри çынсем пирус туртнă чух асăрханусăр пулнипе вăй илнĕ "хĕрлĕ автан" ирхи 3 сехет çурăра А. Никитин хуçалхăне кĕл турĕ тата çак вăхăтра кунта пулнă тăватă арçын пурнăçне татрĕ.

Н.М.: Инкек-синкек тата çынсем хăйсене тĕрлĕ инкекран страхласси пирки калаçнă май шыв çинчи тата райони автоçулсем çинчи аварисем пирки палăртса хăвармасăр та иртме çук. Шывра этем пурнăçĕ татăлнă тĕслĕхсем 2000 çултан пуçласа паянччен 55 пулчĕç. Паллах ку çухатусене каялла тавăрма çук, анчах çынсем (пурте мар) хăйсене тĕрлĕ инкек-синкекрен страхламанни кунта та палăрать.

Çулсем çинчи аварисене пăхсан, кунта чăн-чăн вăрçă пырать тейĕн. Иртнĕ çул район территорийĕнчи автоçулсем çинче 28 авари пулчĕ, вуншар машинăпа ытти техника сиенленсе юрăхсăра тухрĕ, 18 çын вилчĕ тата 81 çын аманчĕ. Çак лару-тăру çынсене техникăпа çула е ĕçе тухас умĕн автогражданла явапла обязательнăй майпа страхласси çине çирĕпрех пăхма ыйтнă пек туйăнать. Кунта çынсем хăйсене е çывăх çыннисене тĕрлĕ инкек-синкекрен страхлани те вырăнлă пулмалла. Çапла калатпăр та-ха, анчах патне çитсен...

– Пурнăç пĕр енлĕ мар. Вăл пирĕн умма кулленех вуншар-çĕршер ыйту кăларса тăратать. Валерий Иванович, хăвăрпа пĕрле паянхи калаçăва хутшăнакансем калани çине Сирĕн хуравсем хатĕр пек туйăнать.

В. В.: Паллах. Эпĕ кунта уйрăммăн пайласа тăмасăр çак цифрăсене илсе кăтартам-ха. Çынсем тĕрлĕ инкекрен страхланасси çулленех вăй илсе пырать. Иртнĕ çул, авă, мĕн чухлĕ суммăлăх страховани ĕçĕсем тунине маларах каларăм-ха та, анчах вĕсене уйрăм тĕссемпе илсе пăхсан та ытлашши пулмасть. Пĕлтĕр эпир 1354970 пин тенкĕ страховани суммилĕх пурлăха страхлама 6,5 пин килĕшŭ, 1214224 пин тенкĕ страховани суммилĕх çурт-йĕр страхлама 4,8 пин килĕшŭ, тĕрлĕ инкек-синкекрен хŭтĕленме 149653 пин тенкĕ стаховани суммилĕх 3,8 пин килĕшŭ, выльăх-чĕрлĕхе 52200 пин тенкĕ страховани суммилĕх 4,5 пин килĕшŭ турăмăр, 2600 единица автотранспорта страхларăмăр. Инкек тŭссен хамăр клиентсене кая юлмасăр пурлăх страхланăшăн 1300 пин тенкĕ, çурт-йĕршĕн 1300 пин тенкĕ, тĕрлĕ инкек-синкекшĕн 500 пин тенкĕ, выльăх-чĕрлĕхшĕн 500 пин тенкĕ, автотранспортшăн 1500 пин тенкĕ тŭлерĕмĕр. Инкек тŭсекенсем пирĕнпе маларах çывăх туслашнă пулсан, çак хисепсем те пысăкрах пулмаллаччĕ, инкек виçи те пĕчĕкленĕччĕ. Андрей Васильевич кăçал Чуманкассинче 5 хваттерлĕ çурт çунса кайни тата унта çулăм тытăнĕнче 3 çын пурнăçĕ татăлни пирки каларĕ. Хăруша ŭкерчĕк, анчах кунта чăннипех пĕр хваттерне те, инке тŭснĕ çынсене те страхламан. Кунта май килнипе хаçат вулакансене çапла шантарса калас килет: "Росгосстрах" компани хăйĕн ятне ямасть, рынок экономикин аталанăвĕнче вăл малашне те халăхпа çывăх пулĕ, страхланнă çынсене вăхăтра пулăшĕ.

–Паян экономикăн пур отраслĕсенче те конкуренци палăрать. Акă, пирĕн районта та темиçе страхлакан компани ĕçлет. Сирĕн компани ыттисенчен мĕнпе уйрăлса тăрать? Клиентсене мĕнпе илĕртет тата тытса тăрать вăл?

– Страховани рынокĕнче нумай çул ĕçлени кунта малти вырăнта. Эпир Раççейри чи сумлă страхлакан организацисенчен пĕри. Иккĕмĕшĕ – пысăк профессиллĕх. Пирĕн специалистсем страховани ĕçĕнче пуян опыт пухнă çынсем. Вĕсем ял хуçалăхĕнче те, пĕчĕк бизнесра та, уйрăм çын харпăрлăхĕнче те, çын пурнăçĕпе сывлăх хăрушлăхĕшĕн те хăйсен ĕçне çŭллĕ шайра тăваççĕ. Анчах çакă лăпланмалли сăлтав мар. Нумай çуллă истории пăхмасăрах Росгосстрах пĕр вырăнта тăмасть, вăл тăтăшах шыравра. Çак çулпа пырса эпир кулленех страховани ĕçĕн малта пыракан стандарчĕсене пурнăçа кĕртетпĕр. "Росгосстрах – кил-çурт", "Росгосстрах – Бизнес", "Росгосстрах – Сывлăх" çĕнĕ программăсем кулленхи пурнăçа çирĕппĕн кĕчĕç те пирĕн страховательсемшĕн чи кирлĕ енсем пулса тăчĕç. Кунтах манăн хамăрпа нумай çул çыхăну тытакан партнерсене тав сăмахĕ калас килет. Чылайăшĕ хăйсен страхлакан пурлăхне совет çулĕсенчех Госстраха шаннăскерсем, çак çултан паян та пăрăнмаççĕ. Вĕсен шутне паян манăн районти Перекет банкне, "Моргаушавтотехсервис" тата "Моргаушскагропромхими" предприятисене, хуçалăхсем хушшинчи "Моргаушская" строительство организацине, "Муркаш район тĕп больници" сывлăх сыхлавĕн муниципаллă учрежденине, "Ударник", "Свобода", "Восток", "Герой", "Оринино" ял хуçалăх предприятийĕсене, "Моргаушская" чăх-чĕп фабрикине, Муркашри сĕт заводне, "Вита" чикĕллĕ явапла ăлă обществăна, Муркашри "Никита" автостанцие кĕртес килет. Çак предприяти-организацисен ертŭçисем пирĕнпе тачă çыхăну тытнинче вĕсем паянхи кунпа çеç пурăнманни курăнать. Ку вăл район пуласлăхĕ.

– Сирĕн ĕç-хĕлĕн тĕп утăмĕсенчен пĕри "автогражданка" пулса тăчĕ. «Росгосстрахăн» Муркашри страхлакан пайĕ ку енпе мĕнле ŭсĕмсем турĕ?

– 2005 çул пĕтĕмлетĕвĕсемпе районти 1898 автомашина хуçи автогражданка явапла хăнăн страхласа хŭтĕлессине пире шанчĕ. Кăçалхи 9 уйăхра ку енпе пирĕн 1939 страховани килĕшĕвĕ ĕçлет те ĕнтĕ. Автоçулсен иртсе çŭремелли енĕсем ансăррине кура эпир хамăр автолюбительсене çул-йĕр çинчи инкексенче инкек виçине май пур таран пĕчĕклетсе пама тăрăшатпăр.

– Валерий Иванович, страховани ĕçĕнчи çĕнĕлĕхсем пирки мĕн калайратăр? Паянхи куна малашлăхлă тесе мĕне палăртатпăр?

– "Росгосстрах" – Раççейри чи аслă страховани компанийĕсенчен пĕри. Ŭсĕме пăхмасăрах эпир пĕр вырăнта тăмастпăр, хамăр ĕçе страховани çĕнĕ тĕсĕсене кĕртетпĕр, çĕнĕ программăсене алла илетпĕр. Акă, рынок улшăнăвĕсене тата страхователсен ыйтăвĕсене шута илсе эпир нумаях пулмасть çынсен пурнăçне нумай вăхăтлăха страхлас ĕçе пуçартăмăр. Пурнăçа страхлани вăл укçа-тенкĕ пухасси мар, чи малтанах çемьене тăрантаракана çухатсан, çемьен укçа-тенкĕ çухатăвне тăруках ямăхтарса ярас марри. Пŭрт-çуртпа килти пурлăха страхланипе пĕрлех паян автостраховани, уйрăмах çĕнĕ автомашинăсене страхласси, малти вырăнта тухрĕ. Çакна шута илсе "Росгосстрах" çĕнĕ "Эталон АВТОКАСКО" проекта реализацилес çул çине тăчĕ. Унăн пĕлтерĕшĕ: автовладелец пирĕн офиса автомашинăна страхлама килет пулсан, страхланă ĕçшĕн унăн (аварисĕр ĕçленĕ пулсан) 20-25 процент таран сахалрах тŭлемелле пулать. Перекет мар-и çакă!

– Çыннăн страховани суйлавĕн приоритечĕ анлăланнине мĕнпе ăнлантаратăр?

– Кăна рынок ыйтăвĕпе сарăлнă пулăм теес килет. Халăхăн пысăк пайĕ ытларах ĕçлесе илме пуçларĕ, банксен кредит программисем ăнăçлă пурнăçа кĕреççĕ, çынсем страховани пĕлтерĕшне пĕлесси ŭсрĕ. Çапла вара граждансем автомашинăсăр пуçне хваттерсене, пŭрт-çуртсене, дачăсене страхлама пуçларĕç. Ман шутпа çакă çынсем пуянрах пулнине мар, пурнăçра харпăрлăх хуçи тарăнрах тымар янине пĕлтерет. Нумаях пулмасть хăй ĕлесе илнĕ укçа-тенкĕпе туяннă хваттерте, уйрăм пŭртре пурăнакан çын хăйĕн пурлăхĕ çине урăхларах пăхма пуçларĕ. Вăл хăйĕн хваттерĕн чăн хакне пĕлнĕрен ăна тĕрлĕ хăрушлăхран сыхласа хăварма тăрăшать те.

– Сирĕн страхлакан пай ял хуçалăхĕнче çĕр ĕçченĕсем пĕтĕм явапла хăйсем çине илсе ĕçленипе мĕнле çыхăнура пырать?

– Çăмăл мар ыйту. Сĕтел çинче çăкăр пултăр тесен пурин те пĕрле тимлемелле. Агропромышленность производствинче çĕр ĕçченĕсем пĕтĕм явапла хăйсем çине илсе ĕçленине страхлас программа шайĕнче эпир ял хуçалăх предприятийĕсене страхованин çакăн пек тĕсĕсене сĕнетпĕр: тыр-пул тухăçне, выльăх-чĕрлĕхе, ял хуçалăх техникипе оборудованине, производство çурчĕсене, чĕртаварпа продукцие страхласси. Патшалăх пулакан çухатăвăн пĕтĕм пайне майлах саплаштарать: федераллă центр 50 процент, республика 25 процента яхăн. Эпир агропрмышленность комплексне çăмăллатнă кредитсем паракан банксемпе активлă çыхăнса ĕçлетпĕр. Вĕсем: Россельхозбанк, РФ Перекет банкĕ.

– Çывăх пуласлăхри чи пирвайхи тĕллевсем еплерех?

– Эпир пĕтĕм тăрăшулăхпа хамăр пата килнĕ клиент кăмăллă юлассишĕн тимлетпĕр. Страхлани канлĕ пурнăç никĕсĕ пулнине çынсене ăнлантарасси – çывăх малашлăхри тĕллев.

– Мĕн сĕннĕ пулăттăр эсир хăвăр патăрта страхланакансене?

– Чи малтанах пире шанса та ĕненсе пирĕнпе çултан-çул çыхăну тытакансене, пирĕн патăмăрта пурнăçа, сывлăха, пурлăха, автотранспорта страхлакансене тав тăватăп. Эпир Сирĕн умри хамăр обязательствăсем пирки манмастпăр. Пурне те сывлăх, телей ăнăçу пултăр. Эпир Сирĕнпе пулма яланах хавас.

Анатолий БЕЛОВ
калаçнă.